ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ОБЩЕСТВО ПАЛАТИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ОБЩЕСТВĂЛЛА ТЁРЁСЛЕВ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Общество палати çинчен" 2011 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 6 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2011, 89 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 11 №; 2014, 5, 11 №-сем; 2016, 10 №; 2017, 7 №; "Республика" хаçат, 2019, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2021, пуш уйăхĕн 24-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1 статьян 1-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмах-семпе улăштарас;

2) 3 статьяра:

а) 6-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем çумĕнчи" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем çумĕнчи" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 8-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем çумĕнчи" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем çумĕнчи" сăмахсемпе улăштарас;

3) 12 статьяра:

а) 1-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 3-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

4) 16^2 статьяра:

а) ятĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

ă) "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

5) 17 статьян 2-мĕш пайĕн 4-мĕш пунктĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

6) 18 статьян 3-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

7) 23 статьяра:

а) 2^1-мĕш пайăн виççĕмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 3^1-мĕш пайăн вун иккĕмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"3) ялан пурăнакан вырăнта пурăнманнипе çыхăннă хушма тăкаксем (талăк укçи) – служба командировкисемпе çыхăннă тăкаксене Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсенче ĕçлени çинчен ĕçлев килĕшĕвĕ тунă ĕçченсене, Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн е Чăваш Республикин патшалăх учрежденийĕсен ĕçченĕсене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртнă виçесемпе саплаштарма.";

8) çакăн пек çырса 23^2 статья хушса хурас:

"23^2 статья. **Общество палати обществăлла сăнав комиссийĕпе çыхăнса ĕçлесси**

1. Федерацин "Ирĕксĕр тытса усракан вырăнсенче этем прависене тивĕçтернине общество енчен тĕрĕслес ĕç çинчен тата ирĕксĕр тытса усракан вырăнсенче çынсене пулăшу парасси çинчен" 2008 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнчи 76-ФЗ №-лĕ саккунĕн 9 статйин 1-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн Общество палати обществăлла сăнав комиссийĕн членĕсен полномочийĕсене пурнăçлассипе çыхăннă тăкаксене саплаштарать тата обществăлла сăнав комиссийĕн ĕç-хĕлне пурлăхпа техника тата информаци тĕлĕшĕнчен тивĕçтерсе тăма пулăшать.

2. Обществăлла сăнав комиссийĕн членĕсен полномочийĕсене пурнăçлассипе çыхăннă тăкаксене саплаштармалли йĕркене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.

3. Çак статьяра кăтартнă тăкаксене саплаштарассине Чăваш Республикин республика бюджетĕнче Общество палатин ĕç-хĕлне тивĕçтерме тата унăн аппаратне тытса тăма пăхса хăварнă укçа-тенкĕ шучĕпе тивĕçтереççĕ.".

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи обществăлла тĕрĕслев çинчен" 2015 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 86 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 12 №; "Республика" хаçат, 2018, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 4 статьян 1-мĕш пайĕн 5-мĕш пунктĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем çумĕнчи" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем çумĕнчи" сăмахсемпе улăштарас;

2) 5 статьян 3-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

3) 6 статьяра:

а) ятĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем çумĕнчи" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем çумĕнчи" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 1-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем çумĕнчи" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем çумĕнчи" сăмахсемпе улăштарас;

б) 2-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

в) 5^1-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзацра тивĕçлĕ хисепри тата падежри "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене тивĕçлĕ хисепри тата падежри "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

иккĕмĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн тивĕçлĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан тивĕçлĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

г) 8-мĕш пайра тивĕçлĕ падежри "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем" сăмахсене тивĕçлĕ падежри "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

4) 7 статьяра:

а) 2-мĕш пая "(малалла – Федерацин тĕрĕслев çинчен калакан саккунĕ)" сăмахсем хушса хурас;

ă) çакăн пек çырса 3-мĕш пай хушса хурас:

"3. Федерацин тĕрĕслев çинчен калакан саккунĕн 9 статйипе килĕшӳллĕн обществăлла сăнав комиссийĕн членĕсен полномочийĕсене пурнăçлассипе çыхăннă тăкаксене саплаштарас тата обществăлла сăнав комиссийĕн ĕçхĕлне пурлăхпа техника тата информаци тĕлĕшĕнчен тивĕçтерсе тăма пулăшас ĕçе Чăваш Республикин Общество палати пурнăçлать.".

3 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи пуш уйăхĕн 29-мĕшĕ
11 №